Тавралăх илемĕ хамăршăнах

# Хитреленсе илемлентĕр Муркаш

Юлашки вăхăтра район центрĕн сăн-сăпачĕ лайăх еннелле улшăннине пурте курăççĕ ĕнтĕ. Иртнĕ çул Мир урамĕнче чечексем ÿсме пуçлани пурне те кăмăла кайрĕ. Çавна шута илсе кăçал кăна Муркаш урамĕсенче 3 пин те 400 тĕм таран тĕрлĕ тĕслĕ гвоздикăсем лартса хăвартăмăр. Çак ĕçсене туса ирттерме çăмăлах пулмарĕ. Малтанах газонсене чавса кăпкалатмалла тата юсамалла пулчĕ. Ял тăрăхĕн администрацийĕнчен ку ĕçсене икĕ специалиста явăçтартăмăр. Тата 35 çын таран ĕçпе тивĕçтерекен центрта учетра тăракансем пулчĕç. Кусем вĕсем Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчен.

Малтанах урамсенче тирпей-илем тăвассипе ĕçлерĕмĕр. Каярахпа газонсем çине чечексем акса хăвартăмăр тата чечек калчисене лартрăмăр. Ку ĕçсене хăш-пĕр предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсем те активлă хутшăнчĕç. Уйрăмах районти почтамтра, Муркаш райповĕнче ĕçлекенсене ырă енчен палăртмалла. Районти Йăла çурчĕн, «Визит» магазинăн ĕçченĕсем çак чечексене халĕ лайăх пăхса тăраççĕ, кашни кунах шăвараççĕ, çум курăкĕсене çумлаççĕ. Анчах та районти шалти ĕçсен пайĕ пирки ку сăмахсене калама çук. Ку учреждени район центрĕн варринче вырнаçнă. Кунти тирпейлĕхрен пĕтĕм Муркашри тирпейлĕх нумай килет. Алăк умĕнчи бетон блоксем мĕнле выртни тÿрех куç умне пулать. Пĕр блокĕ тÿрĕ, тепри чалăш выртать. Картисем çĕрсе чалăшса кайнă. Машинăсем ларнă вырăнта çумăрлă вăхăтра пылчăк юлать.

Юнашарах район сучĕн çурчĕ вырнаçнă. Унта вара пачах урăхла ÿкерчĕк. Тирпей-илем кунта малти вырăнта. Ахальтен мар ĕнтĕ тирпей-илем енĕпе суд учрежденийĕ иртнĕ çул район центрĕнчи предприятисемпе организацисем хушшинче пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ.





Йĕпе-сапа вăхăтĕнче ял урамĕсене автомашинăсемпе кĕрсе çулсене пăсса пĕтернĕ тĕслĕхсем сахал мар. Уйрăмах çакна йывăр тиевлĕ груз турттармалли автомашинăсем пирки каламалла.

Муркашра автомашинăсем çумалли ятарлă вырăн та çук. Кам ăçта пĕлнĕ çавăнта çăвать. Чылайăшĕ автомашинăсене электроподстанци патĕнчи юхан шыв хĕрринче çăвать. Тасамарлăх вара çырмана юхать, тавралăха варалать. Çавăнпа та пирĕн милици, ГИБДД ĕçченĕсемпе, участковăй инспекторсемпе пĕрле тачă çыхăнса ĕçлес пулать.

Хĕллехи вăхăтра çулсем çине тăварлă хăйăр чылай сапаççĕ. Иртнĕ хĕлле те ăна 100 тоннăна яхăн сапнă. Хăш чухне кирлĕ мар çĕртенех сапни те пулать. Халĕ çав хăйăра коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсем 60-70 тоннăна яхăн тирпей-илем кĕртнĕ чухне пуçтарса илнĕ. Тепĕр 20-25 тонни урам хушшисенчех унталла-кунталла вĕçсе выртать. Пурне те пуçтарса илме май çук. Çака та вăл сывлăхшăн сиенлĕ япала пулса тăрать. Çавăнпа та çитес çул тăварлă хăйăр сапса хамăр сывлăха сиенлес марччĕ.

Нумай хваттерлĕ çуртсем таврашĕнче тирпей-илемшĕн унта пурăнакансен ытларах тимлес пулать. Хăш-пĕр çĕрте пухăннă çупçапа вăхăтра турттарса кайман пирки вăл вĕçсе тавралăха сапаланать. Çавăнпа та пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕн тата коммуналлă хуçалăхсен кун пирки шутласа пăхасчĕ. Кашни çурт патĕнчех пĕр хуçа – комендант пулмаллах тесе шутлатăп.

Гагарин урамĕнчи 18-мĕш çуртра çамрăксем ытларах пурăнаççĕ. Çамрăк çынсем тасалăхпа тирпейлĕхе ытларах кăмăлламалла пек туйăнать. Анчах та кунта пурăнакансем пирки ку сăмахсене калама пулмасть. Вĕсенчен ытларахăшĕ çĕнĕ хваттер илме хатĕрленет. Ку çынсем çĕнĕ хваттерсене куççан кунти тирпейсĕрлĕх те çĕнĕ вырăна куçмĕ-ши?

Хăшĕсем çÿп-çапа кирлĕ-кирлĕ мар çĕре кăларса пăрахаççĕ. Кун пеккине Муркашри электроподстанци патĕнче те, Хорнуй патне пырса кĕнĕ çĕрте те курма пулать. Халĕ çак çÿп-çапа пуçтарнă ĕнтĕ. Малашне унта каллех çÿп-çап тăкакансене ответ тыттарма тивет.

Юлашкинчен çавна кăна каласа хăварасшăн. Тавралăх илемĕ, тасалăхпа тирпейлĕх такам валли мар вĕт-ха. Хамăршăнах вăл. Çавăнпа та çакна кашниййĕнех чунпа туйса ăнланасчĕ.

**Н. НИКИТИН,**
**Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.**

**Сăн ÿкерчĕксенче: вилнĕ выльăхсене пытармалли масара йĕркеллĕ карта тытса çавăрнă. Çавна валли 25 пин тенкĕ уйăрнă; çакăн пек йĕркесĕрлĕхе те тĕл пулма пулать Муркашри Гагарин урамĕнчи нумай хваттерлĕ çурт таврашĕнче.**

Вулакан пултарулăхĕ

*Маргарита МАТРОСОВА*

## Сана калайман сăмахсем...

Калас сăмахăм пурччĕ – калаймарăм,
Сана чăрмантарма эп хăяймарăм.
Пĕрре, тен, калăп теттĕмçке, чăнах,
Чуна вырнаçмалли хитре сăмах.

Калас сăмахăм пурччĕ – калаймарăм,
Юрлас тесеттĕм юрă – юрлаймарăм,
Савас тесе пурнаттăм – саваймарăм,
Хăйса… сан кăмăлна эп… тупаймарăм.

• • •

Йĕретпĕр,
Лăшсăр ĕсĕклетпĕр,
Савманлăхра.
Шанманлăхра – çÿретпĕр,
Халь пурăнни вăл –
Пурнăç та мар пек,
Ыранхиех пулассăн чăн пĕр пек.
Ялан ыранхине
Кĕтетпĕр,
Йăлтах – суя,
Эрешлĕ чĕнтĕр пек.

*Василий МАКСИМОВ.*

## Санăн ятупа...

Миçе çул сан ятупа
Чечек çыххи йăтатăп.
– Халăм çук текех йăтма, –
Тесе хама вăрçатăп.

Паян ак каллех хĕвел
Хĕрÿ хĕртсе хăпарчĕ,
Чунăма парса мехел
Мана хысран уттарчĕ.

Татах эпĕ улăхра
Чечек çыххи пухатăп.
Сан валли çак çăтмахра
Телей тени шыратăп.

Район прокуратуринче

# Ĕç сыхлавне пăхăнмалла

Районти хăш-пĕр организацисенче ĕç хăрушсăрлăхне тивĕçтересси кирлĕ шайра мар. Ку ыйтăва район прокуратури кулленхи тимлĕхрен кăлармасть.

Палăртнă тăрăх, 2007 çулхи майăн 19-мĕшĕнче «Свобода» хуçалăх механикĕ Л.М. Чаплин бензовоза заправка тунă чухне çĕр çине ÿкнĕ. Ключица тата пĕçĕ шăммисем хуçăлнипе ăна районти тĕп больницăн хирурги уйрăмне илсе пыма тивнĕ.

Мĕнрен килнĕ-ха çакă? Чи малтанах ĕç хăрушсăрлăхĕ енĕпе тивĕçлĕ йĕрке çуккинчен, кун пек фактсене асăрхаттарассипе ответлă ĕçченсем хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек туса пыманнинчен.

Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 22-мĕш статйипе килĕшÿллĕн ĕç паракан ĕç хăрушсăрлăхне тивĕçтермелле. Вăл ĕç сыхлавĕн патшалăх норматив требованийĕсемпе çыхăнса тăмалла. Асăннă кодексăн 212 статйипе килĕшÿллĕн вара ĕç паракан оборудованисемпе усă курнă чухнехи хăрушсăрлăхшăн ответлă пулса тăрать.

Район прокуратуринче асăннă факт пирки тивĕçлĕ йышăну тăвасси пирки ыйту тăрать.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Районти шалти ĕçсен пайĕнче

# Ачисене тивĕçлĕ воспитани паманшăн

Сăмах кунта Александр Леонидович Балканов пирки пырать. Вăл 1973 çулта çуралнă, Калмăккасси ялĕнче пурăнать. Вăхăтлăх ниçта та ĕçлемест. Унăн çул çитмен ачисем иккĕн. Анчах та вăл ачисене воспитани парассипе тимлемест. Арçын ачасем уроксене сăлтавсăрах килменни час-часах пулать. Çемьери лару-тăру йĕркеллĕ мар. Тĕрĕссипе вĕсем хăйсем тĕллĕн ÿсеççĕ. Çемье пуçĕ час-часах эрех ĕçсе ÿсĕрĕлсен харкашу пуçарать. Калайкасси шкулĕн дирекцийĕ, Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕ енчен асăрхаттарусем пĕрре кăна мар пулнă пулин те, вăл тивĕçлĕ пĕтĕмлетÿсем тума васкаман.

Унăн ывăлĕсем Денис 1995 çулта тата Геннадий 1997 çулта çуралнăскерсем. Вĕсене тивĕçлĕ воспитани парас вырăнне Александр Леонидович ачисем çине час-часах алă çĕклет, ÿсĕр пуçпа ачисене хĕнесе пĕтерет. Кун пек тĕслĕхсем 2007 çулхи март уйăхĕнче пĕрре кăна мар пулнă. Сăлтавне вара ÿсĕр çын кирек хăçан та тупма пултарать.

Анчах та хăйĕн ачисем çине алă çĕклени, вĕсене тивĕçлĕ воспитани памани те преступленисен шутне кĕрет. Çапла вара А.Л. Балканов Раççей Федерацийĕн Уголовнăй кодексĕн 116 статйин 1-мĕш пайĕпе тата 156 статйипе пăхнă преступленисене туни палăрчĕ. Çавна май айăплав материалне район прокурорĕн çумне Ю.М. Семенова ярса панă. Хăйĕн ачисем çине алă çĕклекен ашшĕ пирки мĕнле йышăну тăвассине суд татса парĕ.

**Е. ГОГУЛИНА,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн дознани ушкăнĕн дознавателĕ, милици лейтенанчĕ.**

Хушма вĕрентÿ ыйтăвĕсемпе

# Искусство шкулнех чун туртать

Асăрханă пулĕ эсир, мĕн чухлĕ мероприяти иртмест пулĕ районта. Вĕсенчен нумайăшне Муркашри искусство шкулĕн ачисем илем кÿреççĕ. Вĕсен концертне темиçе пăхсан та йăлăхмастăн: чун-чĕререн хăпартланса паллашатăн сцена çинче юрлакан-ташлакансемпе. Нумаях пулмасть районти Культура çуртĕнче иртнĕ искусство шкулĕн отчетлă концертĕнче те чун-чĕре çĕкленсе ларчĕ. Черетлĕ вĕренÿ çулне вĕçленĕ ятпа саламлама килнĕ район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртрĕ:

–Искусство шкулĕн ачисем яланах район пурнăçĕнче хăйсен пĕлтерĕшлĕ вырăнне йышăнаççĕ.

Çак сăмахсем мĕн тери тарăн пĕлтерĕшлине çав маттур арçын ачасемпе хĕрачасен пултарулăхне курнисенчен кам-ха хирĕçлейĕ. Вăл е ку мероприятинче программăра çак ачасен номерĕ çуккин тÿрех сисĕнет.

Чăннипех те, асăннă шкулăн филиалĕсем усăллă шкулсене телейлех тесе калас килет. Уйрăмах çак сăмахсем искусство шкулĕпе вĕсен уйрăмĕсене çÿрекен ачасене, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене пырса тивет. Мĕншĕн тесен искусствăна, илеме курса-туйса ÿсекен ачасем ырăпа усала уйăрма пĕлеççех. Ку вара пите пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ашшĕ-амăшĕшĕн çеç мар, чи малтанах ачасемшĕн хăйсемшĕн.

Тепĕр енчен, ача вăхăта усăллă ирттерет çеç мар, хушма пĕлÿ илет. Паянхи кун унта 200 ача вĕренет. Музыка уйрăмĕнчисем фортепианопа е гитарăпа, баянпа е аккордеонпа выляма вĕренеççĕ. Отчетлă концертра та çав ачасене пăхса, мăнаçлăх туйăмĕ çуралчĕ. Мĕнле кая пирĕн ачасем пысăк хуласенчи яшсемпе хĕрсенчен? Нимĕнпе те. Нимĕнле пысăк сцена çинче те пите хĕретес çук вĕсем. Хореографи уйрăмне çÿрекенсен ташшисем епле илĕртÿллĕ тата. Сехечĕ-сехечĕпе пăхма хатĕр. Çавăн пекех художество уйрăмĕнче вĕренекенсен ÿкерчĕкĕсем районти, республикăри тĕрлĕ конкурссенче малти вырăнсене йышăнни пирки те каламалла. Ÿкерчĕк тенĕрен, мĕнлерех телей пулĕ вăл хăв куçупа куракан çут çанталăк илемне е урăх илĕртÿллĕхе хут е пир, е урăх япала çине куçарма пĕлни! Пĕтĕмĕшле эстетика уйрăмне çÿрекенсем вара çÿлерех асăннă уйрăмсенче паракан пултарулăха кĕçĕн çулсенчех пĕчĕккĕн хăнăхса пыраççĕ. Çапла майпа каярахпа вăл е ку уйрăма суйлама та çăмăлтарах вĕсене.



Сăмах конкурссем çинчен те пулчĕ те, каласа хăвармаллах. Кăçал акă март уйăхĕнче иртнĕ республикăри "Хавасла пушмак" конкурсра искусство шкулĕн Москакассинчи подразделенине çÿрекенсем "Халăх ташши" номинацире 3 вырăн йышăнма пултарчĕç. Пултарулăхне, халăх юратнине кура районта иртекен пур мероприятинче те тенĕ пекех савăнтараççĕ искусство шкулĕн воспитанникĕсем. Тăпăл-тăпăл илĕртÿллĕ сцена костюмĕпе хĕрачасемпе арçын ачасем чăн-чăн артистсенчен пĕрре те кая мар. Сăмах май, 27 пин тенкĕлĕх çипуç çĕленĕ шкул хăйĕн воспитанникĕсене халăх умне сцена çине кăларма.

Искусство шкулĕнче вĕреннĕ ачасем хăйсен пурнăç çулне культура ĕçĕпе çыхăнтаракансем те çук мар. Кăçал, акă, асăннă шкултан 14-ăн вĕренсе тухрĕç. Шкул пĕтернĕ хыççăн, тен, çак йышран та илнĕ диплома малалла тăсакансем тупăнĕç. Выпускникесенчен вара 4-шĕ Муркаш ачисем, 10-шĕ – искусство шкулĕн Москакассинчи филиалне çÿренисем.

Асăннă шкулăн структура подразделенийĕсем çавăн пекех Мăн Сĕнтĕрте (художество уйрăмĕ), Кашмашра, Ярапайкассинче (хореографи уйрăмĕсем), Тойкилтĕпе Атапайĕнче (музыка уйрăмĕ) пур. Пĕтĕмпе 6 подразделени. 15 преподаватель ачасемпе чунĕсене парса ĕçлени вара сцена çинчен яр уççăн курăнать. Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалланă уявра та яланхи пекех çак шкул воспитанникĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

Халĕ ĕнтĕ вĕсен кĕтнĕ каникул çитрĕ. Муркашри искусство шкулĕнче вĕренме ĕмĕтленекен арçын ачасемпе хĕрачасен вара çакăн пирки манса каймалла мар. Августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа асăннă шкула вĕренме кĕме тÿлевсĕр хатĕрленÿ курсĕсен занятийĕсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Августăн 27-31-мĕшĕсенче асăннă шкула вĕренме кĕмелли экзаменсене тытмалла та искусство шкулĕн вĕренекенĕсем пулса тăмалла. Вара ĕмĕчĕ ачасен тулать. Тепĕр вĕренÿ çулĕнче вĕсем кăçалхи пек залра пăхса лармĕç концерта, сцена çине тухĕç, залра ларакан ачасемшĕн хăйсем тĕслĕх пулса тăрĕç. Асăннă шкул директорĕ Г.М. Анисова каланă тăрăх, тăлăх ачасене тÿлевсĕрех вĕрентеççĕ, нумай ачаллă тата сахал тупăшлă çемьесенчи ачасене – çур хакпа. Апла пулсан Муркашри искусство шкулĕ ăçта вырнаçнине аса илтермелли çеç юлать: Муркашри Гагарин урамĕнчи 10 «а» çурт. Эппин, тепĕр черетлĕ концертра е уявра тĕл пуличчен.

**Л. ПАВЛОВА.**